25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАЙ
16
ЮНКУН
93(6844) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Шкулсенчи экзаменсем умĕн

Иртнĕ çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче СССР **Халăх Комиссарĕсен** Совечĕ «Шкулсенчи **вĕрентӳ ĕçне лайăхлатмалли** мерăсем **çинчен» постановлени йышăнчĕ**. Çав постановлени **тăрăх**, пуçламĕшпе çичĕ çул **вĕренмелли шкултан** вĕренсе тухакансен **тата вăтам шкул** пĕтерекенсен обязательнăй йĕркепе экзамен тытмалла.

Шкулсенчен вĕренсе тухакансене экзамен тыттарни тата ытти классенче вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕслени—учительсемпе вĕренекенсен ĕçне государство тĕрĕслени пулать.

Çĕршыва вĕреннĕ, тĕплĕ пĕлекен, çирĕп **шухăш-кăмăллă** тата писĕхнĕ çынсем **кирлĕ**. **Çавăнпа** государство шкулта **вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕс** хаклама хушать.

Партипе правительство совет шкулĕн ĕçне **лайăхлатас** тата çамрăк ăрăва воспитани **парас** тĕлĕшпе вăрçă çулĕсенче питех те наха решенисем йышăнчĕç. Арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăмăн вĕрентмелле **тунă**, вĕренӳ ĕçĕнче ăмăртăва **пăрахăçланă**, вĕренекенсем хăйсене тыткаламалли **çинчен** калакан правилăсене ĕçе **кĕртнĕ**, **пĕлĕве пилĕк** цифрăллă системăпа **хакламалла** тунă т. ыт. те.

Çаксене пĕтĕмпех шкулсен тĕп задачине—**вĕренекенсене** тĕплĕ те çирĕп пĕлӳ **парас задачăна**—ăнăçлăн пурнăçлас майпа **тунă. Çакă** вăл шкулсенче вĕрентӳпе **воспитани ĕçне** лайăхлатас ĕçре кашни **учителĕн, шкул** руководителĕсен, çутĕç **органĕсенче** ĕçлекенсен ответлăхне ӳстерет.

Партипе правительствăн решенийĕсемпе **хĕçпăшалланса**, совет шкулĕнчи учительсем, партипе совет тата комсомол **организацийĕсем** пулăшнипе, чылай пысăк **çитĕнӳсем** турĕç: шкулсенчи вĕрентӳпе **воспитани** ĕçне лайăхлатрĕç.

Тепĕр пилĕк кунран, майăн 21-мĕшĕнче, **шкулсенче** экзаменсем пуçланаççĕ. Ку **вăл шкулсен**, учительсен тата вĕренекенсен **пурнăçĕнче** чи ответлă тапхăр пулса **тăрать**. **Кашни** шкул вĕренекенсемпе **учительсен** ĕçне пĕтĕçтерет, тĕрĕслет. Шкул **хăйĕн** вĕренекенĕсене мĕнле пĕлӳ **пани**, **ачасене** обществăра тыткалама пĕлес тĕлĕшпе мĕнле хăнăхусем пани, ĕç çине, **ăслăлăх** çине, обществăпа государство **умĕнчи** тивĕçе пурнăçласси çине мĕнле пăхма вĕрентни çинчен правительство **умĕнче** отчет парать. Çавăнпа экзаменсене **лайăх** хатĕрленсе ирттермелле. Экзаменсене ирттерме **уйăрнă комиссисен**, **районри** çутĕç пайĕсен, вĕсен инспекторĕсен **çак тĕлĕшпе** пулакан нумай ыйтусене **вăхăтра** тата пĕлсе татса пама **пултармалла**.

Экзаменсене ирттерме кирлĕ материалсемпе **инструкцисене** шкулсене ярса панă. Тетрадьсемпе ытти хатĕрсем çителĕклех. Экзамен йышăнакан комиссисене пур районсенче те туса çитернĕ, кашни районрах Çутĕç Халăх Комиссариачĕн **уполномоченнăйĕсем** пур. Халĕ ĕçе шкул **директорĕсемпе** экзамен ирттерекен комиссисем **татса** параççĕ.

Чи малтанах, экзамен ирттермелли **инструкцисене пăсни пулмалла** мар. **Вĕренекенрен** материала тĕплĕн ыйтмалла, **шкулта** çирĕп йĕрке пулмалла,—çакă **кашни** шкулшăн закон пулса тăтăр. Экзамен **вăхăтĕнче** ачасемпе **нăшăлтатни**, ыйтусене экзамен итогĕсем лайăхрах пулччăр тесе, хатĕрленмен вĕренекене «çăлас» тесе пани пулмалла мар. Анчах хумханнă вăхăтра ачасене хăпланма, шухăшсене йĕркене кĕртме пулăшасси — учителĕн тивĕçĕ пулса тăрать.

Экзаменсене лайăх ирттересси—ку тĕлĕшпе кирлĕ условисене тунинчен те нумай килет. Экзамен вăхăтĕнче шкулта мĕн пулмаллине малтанах шухăшласа палăртса хумалла. Хăш кун мĕнле экзамен пулассине, вĕренекенсен канăçне епле йĕркелессине, çитес экзамена ăçта хатĕрленмеллине малтанах палăртса хумалла. Вĕренекенсене вĕри апат çитерессине организацилемелле, общежитисем тумалла т. ыт. те.

Ку тĕлĕшпе нумай районсенчи тата хуласенчи çутĕç органĕсем начар мар ĕçлеççĕ. Шупашкар хулинче, Куславкка, Çĕрпӳ, Муркаш тата ытти районсенче экзаменсем ирттермелли расписанисене вăхăтра туса çакнă. Задачăсен примерĕсемпе билетсене туса директорсен аллине панă, вĕсене çирĕплетнĕ. Нумай районсенче шкул директорĕсен, заведующисен, вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕсен канашлăвĕсене, ашшĕ-амăшĕсен тата вĕренекенсен пухăвĕсене ирттернĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи çутĕç пайĕ майăн 13-мĕшĕнче районра учительсен кунне ирттернĕ. Унта пурĕ 200 учитель ытла пулнă. Сĕнтĕрти вăтам шкулта экзамен тытакан 14 вĕренекен валли интернат уçнă. Вĕри апат çитерме 1,5 центнер çăнăх, 12 килограмм какай, 16 килограмм çу, 3 центнер çĕрулми хатĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе Элĕк тата ытти районсенче те лайăх ĕçлеççĕ.

Анчах хăшпĕр районсенче экзаменсене тивĕçлипе хатĕрленмеççĕ-ха. Методикăпа организациллĕ е тата хуçалăх енĕпе тумалли ĕçсене пурнăçламаççĕ. Комсомольски тата Сĕнтĕр районĕсенче вырăс чĕлхипе грамматикăллă упражненисем тумалли примерсене майăн 12-мĕшĕ тĕлне те çирĕплетсе пĕтермен. Çакă вăл экзаменсем ирттермелли инструкцие пăсни пулать. Красноармейски тата Советски районсенче интернатсем, столовăйсем уçма хатĕрленмен.

Экзамен вăхăтĕнче вĕренекенсем шкула йĕркеллĕ çӳреччĕр. Вĕренекен шкула пымасăр, экзамен тытмасăр юлни пулмалла мар. Вăрмар тата Советски районсенче шкул ачисем ĕçе кайнă пирки шкула çӳремен тĕслĕхсем тĕл пулаççĕ. Районсенчи çутĕç пайĕсен, шкул директорĕсемпе заведующисен ачасене пурне те шкула çӳретес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Ку ыйтăва партипе совет тата комсомол организацийĕсен умне лартмалла.

Кăçал пирĕн шкулсем хăйсен хисеплĕ те паха ĕçĕн итогĕсене пĕтĕм çĕршыв çĕнтерӳ кунĕсене уявланă вăхăтра тăваççĕ. Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене пĕтĕмĕшпех çапса аркатни, вăрçă пĕтни, аслă Сталин Тăван çĕршыври халăхсене чĕнсе калани нумай миллионлă шкул ачисемпе учительсене совет культурине аталантарассишĕн татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать. Республикăри шкулсем кăçалхи экзаменсене лайăх ирттерни—Тăван республика 25 çул тултарнă тĕле кӳнĕ чи лайăх парне пулса тăрĕ.

Шкулти экзаменсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕсене лайăх хатĕрленсе, лайăх ирттерер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Совет Информаци Бюровĕн майăн 13-мĕшĕнчи оперативнăй сводкинче кăтартнă тыткăна илнĕ çынсен хисепĕ çумне майăн 14-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче 170.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ тата 10 генерал хутшăннă.

Çапла вара, майăн 9-мĕшĕпе 14-мĕшĕ хушшинче мĕнпур фронтсенче пĕтĕмпе 1 миллион та 230 пин нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тата 101 генерала тыткăна илнĕ.

МАЙĂН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна илес ĕçе пур фронтсенче те вĕçленĕ.

В. М. Молотов Мускава таврăннă

Ĕнер, майăн 14-мĕшĕнче, Сан-Франциско хулинчен Мускава СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов таврăннă. Вăл Сан-Франциско хулинче Пĕрлешнĕ нацисен мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăмалли пĕтĕм тĕнчери организацийĕн уставне хатĕрлеме пухăннă конференцийĕнче пулнă, унта совет делегацине ертсе пынă.

Унпа пĕр вăхăтрах Мускава Сан-Франциско хулинчи конференцире совет делегаци членĕ пулса ĕçленĕ ВЦСПС председателĕ В. В. Кузнецов юлташ таврăннă.

Майăн 1-мĕшĕнчи парад экран çинче

Столицăри кинотеатрсенче «1945 çулхи майăн 1-мĕшĕнче Мускаврa пулса иртнĕ парад» ятлă кинофильм кăтартма пуçланă. Ăна документлă фильмсем ӳкерекен центрти студин операторĕсем ӳкернĕ. Фильмра 1945 çулхи майăн 1-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре пулса иртнĕ Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă вăй-хăватне кăтартса панă. Кинооператорсен объективĕ Сталин юлташ хăйĕн соратникĕсемпе пĕрле, йĕркеленсе тăнă çарсем умĕнче, Мавзолей трибуни çине хăпарнине пичетлесе илнĕ. Фильма парада йышăнаканăн—Хĕрлĕ Çарăн генеральнăй штабĕн начальникĕн арми генералĕн А. И. Антоновăн сăмахĕ кĕнĕ. Куракан ку фильмра çарсем—пехота, кавалери, мотомеханизированнăй чаçсем, танксемпе артиллери—мухтавлăн та чаплăн иртсе кайнине курать.

Фильмăн чылай кадрĕсенче «Иван Сусанин» оперăн эпилогĕнчи «Славься» кĕввине выляакан пĕрлештернĕ оркестр иртсе пынине кăтартнă.

Фильма музыка тĕлĕшĕнчен композиторсем—искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕсем Чернецкий тата Ройтман йĕркелесе илемлетнĕ. Картинăн монтажне Бубрик, Венжер тата Сеткина режиссерсем тунă. (ТАСС).

Малта пыракан районсем тĕштырăсене акса пĕтерчĕç

Ака ĕçне пĕтĕм вăя хурар, çурхи тырăсене çак кунсенчех акса пĕтерер!

Ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, çуракинче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

ЧКАЛОВСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

7. **«Красный Октябрь» колхоз** (колхоз председателĕ **Х. С. Булатов юлташ**). Колхоз тĕштырăсене лайăх пахалăхпа 4 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Тĕштырăсене пĕтĕмпех яровизациленĕ тата имçампа чӳхенĕ вăрлăхпа, ретĕн-ретĕн акнă.

Акакансем **Т. Заринова, Г. Булатова** фронтри пек ĕçленĕ, вĕсем кашни кун 4 гектар акас вырăнне 7 гектар акнă. Сухаçсем: **Я. Абрахматов, З. Якшев, М. Рахматуллов** тата **М. Вахитов** юлташсем кулленхи ĕç нормине кашниех 200-шер процент тултарса пынă.

8. **«Кзыл-Тан» колхоз** (колхоз председателĕ **Н. Х. Фейзулин юлташ**). Колхоз тĕштырăсене 7 ĕç кунĕнче лайăх пахалăхпа акнă. Тĕштырăсене пĕтĕмпех яровизациленĕ вăрлăхпа ретĕн-ретĕн акнă.

Акакан **Х. Фейзулин**, сухаçсем **Хисам Хисеиновпа Алиулла Хуснетдинов** юлташсем икшер норма тултарса ĕçленĕ.

КАНАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

9. **«Хавас» колхоз** (колхоз председателĕ **Лукин юлташ**). Колхоз тĕштырăсене агротехника правилисене тĕплĕн пурнăçласа тата пысăк пахалăхпа 8 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ.

10. **«Красная Армия» колхоз** (колхоз председателĕ **И. Я. Яковлев юлташ**, партин пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Волкова юлташ**). Колхоз 280 гектар тĕштырра 9 ĕç кунĕнче, лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ. Тĕштырăсене пĕтĕмпех яровизациленĕ вăрлăхпа тата ретĕн-ретĕн акнă.

Майракаллă шултăра выльăхсемпе сӳрелекен **Николай Ивлевпа Федор Кожевников** кулленхи нормăна 200-шер процент тултарса ĕçленĕ.

Сухаçсем **Сорокинпа Андреев** юлташсем кулленхи нормăна 150-шар процент тултарса пынă.

11. **Каганович ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Канюшкин юлташ**, пуçламĕш парторганизацин секретарĕ **Ильин** юлташ). Колхоз 165 гектар тĕштырра 8 ĕç кунĕнче, лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ. Тĕштырăсене пĕтĕмпех ретĕн-ретĕн акнă.

Çураки ĕçĕсем районсенче мĕнле пыраççĕ

Ĕнер тĕштырăсемпе пĕр çул ӳсекен курăксене акса пĕтермелли вунăкунлăх вĕçленчĕ. Вунăкунлăхра чылай районсенчи колхозсем тĕштырăсене акса пĕтерчĕç. Хĕрлĕ Ялавлă **Вăрнар районĕ** хыççăн Шăхасан районĕ те акса пĕтерчĕ.

Районсенчен илнĕ сведенисем тăрăх, майăн 15-мĕшĕнче **Муркаш, Çĕрпӳ, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Канаш, районĕсем** тĕштырăсемпе пĕр çул ӳсекен курăксене акмалли плана тултарнă. Муркаш районĕ 9978 гектар вырăнне 10208 гектар акнă. Çĕрпӳ районĕ 10133 гектар вырăнне 10432 гектар акнă. Халĕ çак районсенче кая юлса акакан тырăсене акаççĕ тата çĕрулми лартма пуçăннă. Шупашкар районĕ те тĕштырăсене акса пĕтернĕ, анчах та кунта пĕр çул ӳсекен курăксене акмалли плана тултарайман-ха.

Калинино, Чурачăк, Сĕнтĕр тата ытти хăшпĕр районсенче тĕштырăсем акмалли питĕ сахал юлнă, çак районсен плана паян-ыран тултарма май пур. Çуракин малтанхи кунĕсенче кая юлса пынă Ишлей районĕ майăн 15-мĕшĕ тĕлне çуракин пĕтĕм планне 75 процент тултарнă.

Çураки ĕçĕсем Кувакино, Çĕмĕрле, Йĕпреç, Первомайски, Улатăр тата ытти хăшпĕр районсенче халĕ те çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пыраççĕ.

Шăхасан Çĕрпӳ тата Красноармейски МТС-сем хăйсен планне тултарнă

Шăхасан МТС-ĕ майăн 13-мĕшĕ тĕлне çураки вăхăтĕнче тракторсемпе тумалли ĕç планне 103 процент тултарнă, 5 тонна горючи перекетленĕ.

Çĕрпӳ МТС-ĕ майăн 14-мĕшĕ тĕлне çураки вăхăтĕнче тракторсемпе тумалли ĕç планне 104,7 процент тултарнă, 4,5 тонна горючи перекетленĕ.

Красноармейски МТС-ĕ çураки вăхăтĕнче тракторсемпе тумалли ĕçсен планне, çемçе суха çине куçарса шутласан, майăн 15-мĕшĕ тĕлне 102 процент тултарнă.

Вăрнар районĕ тĕштырăсем акса пĕтеркĕ

Хĕрлĕ Ялавлă Вăрнар районĕнчи колхозсем ир акакан тырăсемпе пĕр çул ӳсекен курăксене ăнăçлăн акса пĕтернĕ. Пурĕ майăн 13-мĕшĕ тĕлне 8.800 гектар акнă (вăл шута 1125 гектар утăлăх акнă вика та кĕрет). Çапла вара тĕштырăсем акмалли плана 105,8 процент тултарнă.

Тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене акса пĕтернĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те тĕштырăсене, пăрçа йышши культурăсене тата пĕр çул ӳсекен курăксене акса пĕтерчĕç. Халĕ нумай колхозсем техникăллă культурăсене акаççĕ тата çĕрулмипе пахча-çимĕç лартмалли вырăнсене сухаласа хатĕрлеççĕ. Çуракинче «Жнейка», «Чувашия», «Победа». «Красноармеец», «Первое мая» тата иртнĕ çул кая юлса пынă «Индустрия», «Новый мир», «Новое хозяйство» колхозсем мала тухрĕç.

«Красный Борденер», «Малалла», «Сила», «Пахарь», «Красное Сормово»—пĕтĕмпе 17 колхоз—кок-сагыз акаççĕ. Паянхи кун тĕлне 30 гектар кок-сагыз акнă.

Тĕштырăсемпе пĕр çул ӳсекен курăксене акса пĕтермелли вунăкунлăхра «Победа» колхоз членĕсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем çуракине 8 кунта вĕçлерĕç. Колхозри 1-мĕш бригада (бригадирĕ Иванова юлташ) майăн 7-мĕшĕ тĕлне ака ĕçне вĕçлесе ытти бригадăсене нумай пулăшрĕ. Сухаçсем 58 çулти Т. Ванифатьев, А. Александрова, Е. Егорова юлташсем кулленех 1.5 гектар сухаларĕç. Ванифатьев çураки пынă вăхăтра 7 кун хушшинче 25,74 ĕçкунĕ тунă. Вăл ирхине 4 сехетре уя тухса касхине тĕттĕм пуличченех ĕçленĕ. Колхозра çураки вăхăтĕнче пĕр лаша та суранланни пулман.

Халĕ колхозниксем харпăрхăй кил вырăнĕсенче çĕрулми лартма тата пахча-çимĕçсем акма хатĕрленеççĕ.

Çак кунсенчех колхоз çĕртме пуссине тислĕк кăларма тытăнать, майăн 20-мĕшĕнчен çĕртме сухине тума пуçăнаççĕ.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

* * *

МУРКАШ, майăн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Ярапайкассинчи «Автогигант» колхоз (председателĕ Горбунов юлташ) çуракине 6 кун хушшинче вĕçлерĕ. Кунта кашни колхозник ирхине ирех пуçласа касхине тĕттĕм пуличченех уйхирте ĕçленĕ. Фронтовик арăмĕсем Ивановăпа Матюшкина колхозницăсем кашни кунах нормăна 150-шар процент тултарса пынă. Хальхи вăхăтра Алексеева ертсе пыракан бригада çĕрулми тата пахча-çимĕç лартмалли вырăнсене сухалать.

Колхозри агитаторсем яланах колхозниксем хушшинче ĕçлеççĕ. Трофимова, Романова агитаторсем колхозниксене хаçатсем вуласа параççĕ, хамăр çĕршывпа тата ют çĕршыври хыпарсемпе паллаштараççĕ. Боевой листоксем кашни бригадăрах икĕ кунта пĕрре тухса тăраççĕ.

«Автогигант» колхоз кӳршĕри Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет. Халĕ «Автогигант» колхоз малта пырать.

Ф. МАЛЫШКИН.

МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕМ

ИШЛЕЙ. Районри малта пыракан колхозсем çуракине вăхăтра тухса, лайăх пахалăхпа ĕçлесе, тĕштырăсем акса пĕтерчĕç.

«Правда», «Новое Марково», Водопьянов, Калинин ячĕсемпе тăракан (Тăрăн ял Совечĕ), «Красноармеец», «Самолет», «Красный флаг», «Красный воин» колхозсем районра чи малтан тĕштырăсем акса пĕтерчĕç. Тĕштырăсем акса пĕтермелли вунăкунлăхра чылай колхозсем ака ĕçне вĕçлеççĕ.

Юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Мăнал ял Советĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз акмалли плана 50 процент çеç тултарнă. Колхоз председателĕ Ильин юлташ çуракин малтанхи кунĕсенчех ĕçе тĕрĕс организацилемен, икĕ бригадăри пĕтĕм лашасемпе пĕр çĕрте сухаланă. Çапла майпа кун иртнĕ, ĕç тухăçлăхĕ хăпарман.

«Алгаши», «Комбайн», «Чандрово», «Волгарь», Ленин тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем те кая юлаççĕ.

Çуракинче хăшпĕр колхозсем кая юлни МТС-ран та килет. Машинно-тракторнăй станцин трактор бригадин бригадирĕсем дирекци панă маршрута пăсаççĕ, хăйсем ăçта кая теççĕ, çавăнта каяççĕ. Акă Ленин ячĕпе тăракан колхоз лашасем сахал пирки юлса пырать. Ку колхозра тракторсем ĕçлемелле пулнă. Колхоз председателĕ М. Любимов С. Иванов бригадир патне висĕ хутчен çитнĕ пулин те, бригадир, ыран пыратпăр тесе, 8 кун хушши суйнă. Юлашкинчен ĕçре малта пыракан, туртăм вăйĕ ытлашшинех пур «1-ое августа» колхоза кайнă.

В. ГУСЬКОВ.

Пĕр сăлтавсăрах юлса пыраççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Уйпуç ял Советне Чапаев тата Энгельс ячĕпе тăракан колхозсем кĕреççĕ. Çак колхозсен условисем пĕр пекех. Çуракинче ăнăçлă ĕçлеме пур майсем те пур. Анчах ĕçре пачах урăхла пулса пырать.

Чапаев ячĕпе тăракан колхоз пĕрчĕллĕ тырăсене 9 кунра акса пĕтерчĕ. Пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсем акмалли çĕре те пĕтĕмпех сухаласа пĕтерчĕ. Ĕçре уйрăмах çамрăксем пример параççĕ. В. Яхатин, М. Назаров, А. Сидоров комсомолецсем кунне пĕр гектар сухалас вырăнне 2-шер гектар сухаларĕç. Çуракине кĕске срокра вĕçлесе, çак колхоз районри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ.

Энгельс ячĕпе тăракан колхозăн та çав условисемех. Анчах вăл паянхи куна 300 гектар сухалас вырăнне 180 гектар çеç сухаланă, 83 гектар çеç акнă. Тĕштырăсемпе курăксене акса пĕтермелли вунăкунлăхра та колхоз председателĕ Тарасов юлташ улшăнусем тăваймарĕ. Сеялкăсем висшер кун ĕççĕр лараççĕ, çав хушăрах, агротехникăна пăсса, алăпа акаççĕ. Колхозра кӳлме вĕрентнĕ вăкăрсем те пур, анчах вĕсемпе ĕçре усă курмаççĕ.

П. ТИХОНОВ.

Ăмăртакан колхозсенче

ПЕРВОМАЙСКОЕ, майăн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). «Красный луч» тата «Искра» колхозсем вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. «Искра» колхоз 288 гектар, «Красный луч» колхоз 264 гектар акса, тĕштырăсем тата пĕр çул ӳсекен курăксем акмалли плана тултарчĕç. Халĕ вир, хуратул акмалли тата çĕрулми лартмалли çĕре сухалаççĕ. Тепĕр 2—3 кунтан асăннă колхозсенче çураки вĕçленет. Çак колхозсенче бригадăсем хушшинче те ăмăрту анлăн пырать. «Искра» колхозра 1-мĕш бригада (бригадирĕ А. Данилкина), «Красный луч» колхозра 3-мĕш бригада (бригадирĕ Д. Шавилов юлташ) ăмăртура мала тухнă. Çак бригадăсене асăннă колхозсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене панă. Колхозсенче агитмассăллă ĕçе лайăх организациленĕ.

Ф. АКИМОВ.

Ферма çумĕнчи участока акаççĕ

Ишлей районĕнчи «Новая жизнь» колхоз (председателĕ М. Васильев юлташ) кăçал çуракинче иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлерĕ. Çĕнтерӳ кунĕ çитнипе савăнса, колхозниксемпе колхозницăсем кунĕн-çĕрĕн хирте ĕçлеççĕ. Кулленхи нормăна тултарайман пĕр колхозник та çук. Ф. Краснова, А. Александрова колхозницăсем хăйсен нормине 120—130-шер процент тултараççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем ферма çумĕнчи участока вăкăрсемпе сухаласа 2 гектар выльăх кăшманĕ акрĕç.

Н. НИКИФОРОВ.

СССР Совнаркомĕнче

И. И. Мечников çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май унăн ятне ĕмĕрлĕхе асăнмалла тумалли ĕçсем çинчен

Вырăс микробиологийĕн çав тери пысăк деятелĕ, ученый Илья Ильич Мечников çуралнăранпа 1945 çулхи майăн 15-мĕшĕнче 100 çул çитнĕ май, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Мускаврa И. И. Мечниковăн памятникне лартас.

2. И. И. Мечниковăн пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан çак вырăнсенче асăнтару хăмисем çапса хурас:

а) Харьковра—Харьковри государство университечĕн çуртĕ çине;

б) Ленинградра—Ленинградри государство университечĕн çуртĕ çине.

3. Микробиологи, иммунологи, эпидемиологи тĕлĕшпе тата ерекен чирсенчен сыватас тĕлĕшпе питĕ паха кĕнекесемпе статьясем çырнăшăн тата биологи тĕлĕшпе наукăллă пысăк çитĕнӳсем тунăшăн памашкăн —

а) И. И. Мечников ячĕпе памалли ылттăн медаль тăвас; çав медале çуллен совет ученăйĕсемпе ют çĕршывсенчи ученăйсене пĕр çынна памалла;

б) И. И. Мечников ячĕпе памалли икĕ преми тăвас, пĕри 50.000 тенкĕлĕх, тепри 25.000 тенкĕлĕх; вĕсене çуллен совет ученăйĕсене памалла.

Медальсемпе премисене пама СССР Наука академине хушас. СССР Наука академине çав медальпе премисене памалли йĕрке çинчен Положени çырса, ăна çирĕплетме СССР Совнаркомне тăратма хушас.

4. Çаксене И. И. Мечников ятне парас:

а) Микробиологсен, эпидемиологсен тата инфекционистсен Пĕтĕм Союзри обществине;

б) Одессăри государство университетне.

5. И. И. Мечников ячĕпе çакăн пек стипендисем памалла тăвас:

а) СССР-ти Медицина наукисен академийĕнче—докторантсене уйăхне 1.300-шер тенкĕлĕх 3 стипенди; вĕсене СССР-ти Медицина наукисен академийĕн президиумĕ докторантсене тата микробиологи тĕлĕшпе ĕçлекен питĕ паллă çамрăк ученăйсене висĕ çуллăха парать;

б) Мускаври Ленин орденлĕ Пĕррелĕш медицина институтĕнче—аслă курссенче вĕренекен чи пултаруллă студентсене уйăхне 400-шер тенкĕлĕх 2 стипенди;

в) Мускаври Ленин орденлĕ Ломоносов ячĕпе тăракан государство университетĕнче—аслă курссенче вĕренекен чи пултаруллă студентсене уйăхне 400-шер тенкĕлĕх 2 стипенди;

г) Одессăри медицина институтĕнче — аслă курссенче вĕренекен чи пултаруллă студентсене уйăхне 400-шер тенкĕлĕх 2 стипенди;

д) Харьковри медицина институтĕнче—аслă курссенче вĕренекен чи пултаруллă студентсене уйăхне 400-шер тенкĕлĕх 2 стипенди;

е) Ленинградри Ленин орденлĕ государство университетĕнче — аслă курссенче вĕренекен чи пултаруллă студентсене уйăхне 400-шер тенкĕлĕх 2 стипенди;

ж) Одессăри государство университетĕнче—аслă курссенче вĕренекен чи пултаруллă студентсене уйăхне 400-шер тенкĕлĕх 2 стипенди.

6. СССР Наркомздравне 1945 çулта çак кĕнекесене пичетлесе кăларма хушас:

а) И. И. Мечниковăн «Невосприимчивость при инфекционных заболеваниях» ятлă монографине;

б) И. И. Мечниковăн «Сравнительная патология воспаления» ятлă кĕнекине;

в) И. И. Мечниковăн биографине.

7. СССР Наркомздравне 1945 çулта И. И. Мечниковăн сочиненийĕсен пуххине пичетлесе кăларма пуçлама хушас.

8. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинематографи комитетне (Большаков юлташа) 1946 çулта И. И. Мечниковăн пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан пурте ăнланмалла фильм кăларма хушас.

НОВОСИБИРСКРА ОПЕРĂПА БАЛЕТ ТЕАТРĔ УÇĂЛНĂ

Çак кунсенче Новосибирскра оперăпа балет театрĕ уçнă. Çав театра уçни Совет Союзĕнче музыка тĕлĕшпе тунă питĕ пысăк ĕç пулса тăрать. Театра вăрçă вăхăтĕнче туса пĕтернĕ. Унăн çуртĕ питĕ пысăк, архитектура енчен вăл пирĕн çĕршыври чи лайăх çуртсенчен пĕри пулса тăрать. Зала 2.000 çын вырнаçать. Çак тĕлĕшпе вăл пирĕн çĕршыври чи пысăк театр çуртĕ пулса тăрать. (ТАСС).

Республика юбилейĕ умĕнхи ăмăрту

КӲКЕÇ. (Телефонпа). Райпромкомбинат коллективĕ, республика юбилейĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, апрель уйăхĕнчи программăна 122 процент тултарчĕ. Çăматă йăвалакан цехри Н. Иванов юлташ ертсе пыракан бригада 200 процент, витресем тăвакан цехри Локтев юлташ ертсе пыракан бригада 150 процент тултарнă. Райпромкомбинат коллективĕ Ишлей райпромкомбиначĕн коллективĕпе ăмăртса ĕçлет.

Хӗрлӗ Ҫарпа совет халӑхӗн аслӑ ҫӗнтерӗвӗ

Совет халӑхӗн нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ пынӑ Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫи ҫӗнтерӳллӗн вӗҫленчӗ. «Хӗрлӗ Ҫарпа пирӗн союзниксен ҫарӗсем чӗркуҫҫи ҫине тӑратнӑ фашистла Германи хӑйне ҫӗнтернине йышӑнчӗ те хӑй пӗр сӑмахсӑрах парӑнни ҫинчен пӗлтерчӗ». Германи империалисчӗсем, пирӗн ирӗклӗ халӑха чуралантарма ӗмӗтленнӗскерсем, пӗтӗм тӗнчене ҫӗнтерсе илме ӗмӗтленнӗскерсем, халӗ пӗтӗмпех парӑнчӗҫ. Берлинӑн мӑкӑрланакан ишӗлчӗкӗсем фашистла виҫҫӗмӗш импери мухтавсӑр арканса кайса пӗтнине кӑтартса параҫҫӗ.

«Паянтан пуҫласа,—терӗ Сталин юлташ майӑн 9-мӗшӗнче халӑха чӗнсе каланӑ чух,—Европа ҫинче халӑхсен ирӗклӗхӗн тата халӑхсем хушшинчи мирӗн аслӑ ялавӗ ялкӑшса тӑрӗ».

Пирӗн ҫӗршыври халӑхсем Тӑван ҫӗршыва сыхлас тесе, культурӑпа цивилизацие ҫӑлса хӑварас тесе фашистла сӑтӑрҫӑсене хирӗҫ тунӑ йывӑр та юнлӑ кӗрешӳ чарӑнчӗ. Мирлӗ аталану тапхӑрӗ пуҫланса кайрӗ. Ҫӗнӗрен ҫуралнин ҫуркунийӗ ҫитрӗ, ирӗклӗхе юрататакан ҫӗршывсенчи халӑхсем мирлӗ пурнӑҫ тӑвас вӑхӑт ҫитрӗ.

Хӗрлӗ Ҫар хӑйӗн умне Верховнӑй Главнокомандующи Сталин юлташ лартнӑ задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫларӗ. Пирӗн союзниксен ҫарӗсемпе пӗрле кӗрешсе вӑл нимӗҫсен фашистла ҫарне аркатса тӑкрӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн воинӗсем Берлин хули ҫине ҫӗнтерӳ ялавне ҫӗклесе ҫакрӗҫ.

Хӗрлӗ Ҫарпа пирӗн союзниксен ҫарӗсем питӗ вӑйлӑн пырса ҫапнине пула, гитлерла Германин пӗр сӑмахсӑрах парӑнмалла пулчӗ. Вӑл халӗ малалла хирӗҫ тӑмашкӑн хӑйӗн пур майӗсене те ҫухатрӗ. Германи ҫарӗн вӑтаҫӗрти ушкӑнне аркатса тӑкни, Хӗрлӗ Ҫар Берлина йышӑнса илни—Германие вӑрҫӑра парӑнтарас тӗлӗшпе чи татӑклӑ вырӑн йышӑнса тӑракан фактсем пулса тӑчӗҫ. Германи столицине туртса илнӗ хыҫҫӑн. Германин государствӑна тата ҫара тытса йӗркелесе пымалли пур мелӗсем те татӑклӑнах пӗтсе ларчӗҫ.

Ҫак вӑйлӑ та чее тӑшмана хирӗҫ пынӑ хаяр кӗрешӳре тӗп вырӑна совет халӑхӗпе унӑн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӗ. Фашистла йыткӗтӗвӗсене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳре тӗп йывӑрлӑха хӑйсем ҫине илнӗскерсем, йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Польшӑна тата Хӗвеланӑҫ Европӑри ытти государствӑсене ҫӑмӑллӑн та хӑвӑрт ҫӗнтернипе хавхаланнӑ фашистла Германи, хӑйӗн ҫарне ҫӗнтерекенни ҫук текенскер, хӑйӗн «блицкриг» ятлӑ стратегиллӗ теорийӗпе мухтанаканскер, 1941 ҫулта ҫулла хӑйӗн лайӑх йӗркелесе хатӗрленӗ ҫар машинине Совет Союзне хирӗҫ кӑларса ячӗ.

Нимӗҫсен командованийӗ Совет Союзне хирӗҫ вӑрҫнӑ чухне хӑй пӑхӑнтарнӑ ҫӗршывсенчи пысӑк пуянлӑхсемпе питӗ анлӑн усӑ курнӑ. Гитлеровецсем совет ҫӗршывӗ ҫине кӗтмен ҫӗртен тапӑннинчен тухакан усӑллӑхсемпе туллин усӑ курма тӑрӑшнӑ. Паллах, ют ҫӗршывсенче пурӑнакан пирӗн туссенчен те хӑшӗ-пӗрисем ҫапла шутлатчӗҫ: пирӗн ҫӗршыва, Совет Союзне аркатса тӑкма нимӗҫсене 2—3 эрнерен ытла кирлӗ мар, тетчӗҫ. Анчах гитлерла захватчиксен ухмахла шухӑшӗсем, вӗсем темӗн тери вӑйлӑ ҫарпа килсе кӗчӗҫ пулин те, вӗсене хирӗҫ совет халӑхӗ нумай вӑхӑт хушши пӗр пӗччен ҫеҫ кӗрешрӗ пулин те, пурнӑҫа кӗреймерӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫ командованийӗн планӗсене ҫапса аркатрӗ. Хӗрлӗ Ҫар «блицкриг» шухӑшне—ҫиҫӗм пек хӑвӑрт вӑрҫӑ шухӑшне—вӑрҫӑн малтанхи уйӑхӗсенчех тӗпренех пӑрахӑҫа кӑларчӗ. Малашне нимӗҫсен ытти шухӑшӗсем те пӗрин хыҫҫӑн тепри пӑрахӑҫа тухса пычӗҫ. 1941 ҫулхи хӗллехи кампани нимӗҫсен фашистла ҫарӗсене Мускав патӗнче аркатса тӑкнипе вӗҫленчӗ.

Историе кӗме тивӗҫлӗ ҫак ҫапӑҫура Германи ҫарне ҫӗнтерекенни ҫук текен юмаха тӗппипех ҫуяна кӑларнӑ. Европа тӑрӑх хӑвӑрт утса тухнӑ нимӗҫ ҫарӗсене пуҫласа Мускав ҫывӑхӗнче тӗппипех аркатнӑ та, вӗсем вара хӗҫпӑшалне, ҫар техникине пӑрахса, тыткӑна парӑнса нимӗн йӗркисӗр хӗвеланӑҫнелле чакма тытӑннӑ. Нимӗҫсене Мускав патӗнче аркатни Хӗрлӗ Ҫарӑн ытти ҫӗнтерӗвӗсен, гитлерла Германие пӗтерессипатне илсе пынӑскерсен, пуҫламӑшӗ пулса тӑрать.

1942 ҫулта вӑрҫӑра татах та паллӑрах ӗҫсем пулса иртнӗ. Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑн ку ҫулӗ Севастополь хулине паттӑрла та вилӗмсӗр хӳтӗленипе тата Сталинград хулине историллӗ хӳтӗленипе паллӑ пулса тӑрать. Сталинград патӗнчи операцисене питӗ тӗплӗн шутласа пурнӑҫа кӗртнине пула, унта нимӗҫсен суйласа илнӗ ҫарӗсен 300 пин ҫынран тӑракан ушкӑнне хупӑрласа илнӗ те аркатса тӑкнӑ. 1941 ҫулта Хӗрлӗ Ҫар кӗрешӳре паттӑрлӑх тата хӑвӑртлӑхпа усӑ курма пултарнине кӑтартнӑ пулсан, Сталинград патӗнчи ҫапӑҫура вӑл ҫак пахалӑхсемпе пӗрлех тата анлӑ масштабпа наступлени тунӑ чухне хальхи вӑхӑтра вӑрҫӑ искусствин ҫӳлти пусӑмӗпе анлӑн усӑ курма пултарнине те ӑста кӑтартса пачӗ. Нимӗҫсен ҫарне Сталинград патӗнче пырса ҫапнӑ хыҫҫӑн, вӑл урӑх вӑй илсе ура ҫине тӑма пултараймарӗ. Сталинград патӗнчи ҫапӑҫу Германи ҫарӗ пӗтессине палӑртрӗ.

Сталинград патӗнчи ҫапӑҫура ҫӗнтерни хыҫҫӑн Хӗрлӗ Ҫар татах та ҫӗнтерӳ ҫин ҫӗнтерӳ туса пычӗ, вӑл нимӗҫсене вӑйлӑрах та вӑйлӑрах пыра-пыра ҫапрӗ. Пирӗн ҫарсем хӑвӑртрах та хӑвӑртрах хӗвеланӑҫнелле наступлени туса пыма тытӑнчӗҫ.

1943 ҫулта ҫулла Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫ ҫарӗн тепӗр пысӑк ушкӑнне, пирӗн Тӑван ҫӗршыва шалалла кӗрсе кайса Сталинград ҫывӑхӗнче ҫухатнӑ стратегиллӗ пуҫарӑва каялла тавӑрма хӑтланнӑскере, аркатса тӑкрӗ. Ку ҫул Днепр шывӗн сулахай ҫыранӗнчи Украинӑна тата Белоруссин чылай пайне нимӗҫсенчен тасатнипе вӗҫленчӗ. Ҫак пӗр ҫул хушшинче кӑна Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнче нимӗҫсем 4 миллион ҫын ытла ҫухатнӑ.

1941 тата 1942 ҫулсенче гитлерла командованин наступлени тӑвас стратегийӗ пӗтсе ларчӗ. 1943 ҫулта вара фашистла генералсем Хӗрлӗ Ҫарӑн хӑвӑрттӑн пыракан наступленине чарма хӑтланнисем пурте арканса кайрӗҫ. Ку тӗлӗшпе вӗсене нумай хисеплӗ тӗрлӗ рубежсемпе «валсем» ҫинче чикӗленсе тӑракан «эластичнӑй оборонӑсем» те пулӑшаймарӗҫ. Пӗтӗмӗшпе илсе каласан, ку ӗнтӗ нимӗҫсем вӑрҫӑра парӑна пуҫланине пӗлтерчӗ.

1944 ҫул Хӗрлӗ Ҫарӑн татӑклӑ та аслӑ ҫӗнтерӗвӗсемпе, гитлерла Германи тӗппипех арканса каясси патне пырса тухнипе, вӑрҫӑ Германи ҫӗрӗ ҫине куҫнипе паллӑ пулса тӑрать. 1944 ҫулти вӑрҫӑ ӗҫӗсенче нимӗҫ ҫарӗ Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнче 136 дивизи тата темӗн чухлӗ техника ҫухатнӑ. Хӗрлӗ Ҫар вӑйлӑн пыра-пыра ҫапнипе пула, Гитлер генералитечӗ Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнчи операцисене «шӑнтса лартма» хӑтланнисем пурте, позициллӗ вӑрҫӑ пуҫласа яма тата вӑхӑта ытларах тӑсма тӑрӑшнисем пурте татӑклӑнах арканса пынӑ.

Фашистсен пуҫлӑхӗсем Пӗрлешнӗ нацисем хушшинче хирӗҫӳсем кӑларса яма, союзниксен ӗҫӗнчи пӗрлӗхе пӑсса яма тӑрӑшнӑ. Анчах ку тӗлӗшпе те вӗсен нимӗн те тухман.

Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнтерӗвӗсем пирӗн союзниксене тӑшмана Ҫурҫӗр Африкӑра аркатса тӑкма, Италие союзниксене хирӗҫ вӑрҫаканнисен шутӗнчен кӑларма пулӑшрӗҫ. 1944 ҫулта вара Европӑн хӗвеланӑҫӗнче вӑрҫӑ ӗҫӗсем пуҫласа яма май пачӗҫ. Германи икӗ фронт хушшинче хӗсӗнсе ларчӗ. Хӗрлӗ Ҫар Германин сателлисчӗсене парӑнтарса стройран кӑларчӗ. Ҫапла вара Германие татӑклӑн пырса ҫапса, ӑна вӑрҫӑра парӑнтармалли условисем пулса тӑчӗҫ.

1945 ҫул Хӗрлӗ Ҫарӑн татӑклӑ ҫӗнтерӗвӗсен ҫулӗ пулса тӑчӗ. Совет ҫарӗсем вӑйлӑн пырса ҫапнипе пула, тӑшманӑн мӗнпур оборони арканса кайрӗ. Кӑҫалхи январь уйӑхӗнче пуҫланнӑ наступленипе Хӗрлӗ Ҫар темиҫе кун хушшинчех Германи ҫарӗсене Висла шывӗ патӗнчен Одер шывӗн леш енне сирпӗтсе ячӗ. Ҫакна питӗ ӑста тунипе пула, тӑшман ҫарӗн Хӗвелтухӑҫ Пруссири ушкӑнне тӗп ҫартан татса илсе, тинӗс хӗррине хӗссе хунӑ та каярахпа вара ӑна аркатса тӑкнӑ. Нимӗҫсен Карпат тӑвӗсем таврашӗнчи, Венгрири оборони те арканса кайрӗ. Нимӗҫсем Хӗрлӗ Ҫара Австрие шалалла кӗрсе каясран тытса чарма хӑтланса пӑхрӗҫ. Паллах, ку тӗлӗшпе вӗсен нимӗн те тухмарӗ.

Кӑҫал ҫуркуннепе Одер шывӗ ҫинче хаяр ҫапӑҫусем пуҫланса кайрӗҫ. Ку ҫапӑҫусен тӗп тӗллевӗ—Германин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене тӗппипех аркатса тӑкасси, Берлина тытса илесси тата Германие пӗр сӑмахсӑрах парӑнтарасси пулнӑ.

Гитлерла командовани Одер шывӗ тӑрӑхӗнчи оборона чиккине пирӗн ҫарсем татса кӗрессинчен сыхламашкӑн мӗнпур вӑйне хунӑ. Кунта вӗсем темӗн чухлӗ тупӑсемпе вӑйлӑлатса ҫирӗплетнӗ оборона линийӗ туса хунӑ. Кунта вӗсем мӗнпур резервӗсене, хӗвеланӑҫри фронтран та нумай дивизисене, пухса илнӗ. Хӗвеланӑҫӗнче нимӗҫсен оборони ҫав тери вӑйсӑрланса юлнӑ. Ку ӗнтӗ гитлерла командованин провокациллӗ ӗҫӗ, Хӗрлӗ Ҫара тытса чарса, ҫав вӑхӑтрах союзниксен ретӗнче темӗнле иккӗленмелле шухӑшсем сармалли ӗҫӗ пулнӑ.

Анчах та тӑшман темӗн хӑтланни те ӑна усӑ парайман. Оборонӑна хатӗрленӗ сарлака та тулли юханшыва, сӗм вӑрмансене, темӗн чухлӗ оборона линийӗсене пирӗн ҫарсем ҫӗнтерсе илнӗ. Тӑшман пирӗн артиллерипе минометсем, совет авиацийӗн бомбисем пырса ҫапнине чӑтса тӑрайман. Тепӗр темиҫе кунран ҫапӑҫу Берлин ҫывӑхӗнче пуҫланса кайнӑ, унтан пирӗн ҫарсем хулана йӗри-тавра хупӑрласа илнӗ те ҫапӑҫу хулара пуҫланнӑ

Майӑн 2-мӗшӗнче Берлин парӑннӑ. Ку вӑхӑт тӗлне Германин пысӑк пайне пирӗн ҫарсемпе союзниксен ҫарӗсем йышӑнса илнӗ, чылай вырӑнсенче—Эльба шывӗ ҫинче—Хӗрлӗ Ҫар союзниксен ҫарӗсемпе пӗрлешнӗ. Майӑн 8-мӗшӗнче Германи ҫарӗсен командованийӗн хирӗҫ тӑма пӑрахса парӑнмалла пулнӑ.

Тӗнчери чи аслӑ ҫапӑҫу, историре ку таранччен пулман ҫапӑҫу, ҫапла вӗҫленнӗ.

Ку вӑрҫа гитлерла Германи, иртнӗ вӑрҫӑсенчи Германипе танлаштарсан, чылай вӑйлӑ, чее те опытлӑ тӑшман пулса пуҫларӗ. Ҫапах та Германие халь аркатса тӑкнӑ, унӑн хирӗҫ тӑмалли майӗсене пӗтерсе пӑрахнӑ. Хӗрлӗ Ҫарпа совет халӑхӗ, вӗсемпе пӗрлех ирӗклӗхе юратакан мӗнпур этемлӗх, халӗ историри аслӑ ҫӗнтерӗве уявлаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫарпа совет халӑхӗ хӑйсен юратнӑ Тӑван ҫӗршывне сыхланӑ, вӗсем Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революцин ҫӗнтерӗвӗсене, пирӗн ҫӗршывра совет влаҫӗ—ӗҫҫыннисен влаҫӗ туса хунӑскере, сыхланӑ, ҫавӑнпа ҫӗнтернӗ. Советлӑ социализмлӑ строй—ҫакӑ пулать ӗнтӗ пирӗн халӑхпа паттӑр Хӗрлӗ Ҫара никам ҫӗнтерейми аслӑ вӑй, хӑйӗн ҫулӗ ҫинчи мӗнпур чӑрмавсемпе йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме вӑй парса тӑракан ҫӑлкуҫӗ.

Гитлерпа унӑн вӑрӑ-хурахла пуҫлӑхӗсем Совет Союзне хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫласа ярса, вӗсем Хӗрлӗ Ҫар вӑйсӑр пуласси ҫине, вӑл хирӗҫ тӑма начар хатӗрленни ҫине, Совет Союзӗнчи халӑхсем пӗр-пӗринпе хирӗҫсе кайма пултарасси ҫине, рабочи класпа хресченсем хирӗҫсе каясси ҫине шаннӑ. Вӗсем совет влаҫӗ пӗтсе совет государстви саланса каясси ҫине шаннӑ. Вӗсем пирӗн Тӑван ҫӗршыва—Совет Союзне пӗтерсе лартма шутланӑ. Анчах та «ӗҫре, гитлеровецсем шутланӑ пек мар, урӑхла пулчӗ. Германи тӗппипех арканса кайрӗ» (Сталин). Вӑрҫӑ кунӗсенче совет халӑхӗн моральлӗ-политикӑллӑ пӗрлӗхӗ татах та ытларах ҫирӗпленчӗ, ССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗ татах та вӑйлӑланчӗ. Пирӗн советлӑ Тӑван ҫӗршывӑн вӑйӗ ҫакӑнта пулса тӑрать те ӗнтӗ.

Совет стройне пула пирӗн совет халӑхӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисене пӑхмасӑрах, пирӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйсем валли ҫӗнтерӳ тумашкӑн чи малта пыракан техникӑна ҫителӗклӗ парса тӑма пултарчӗ. Совет ҫыннисем фронтшӑн, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшу парас тесе тӑрӑшрӗҫ. «Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне сыхласа хӑварас тесе эпир тунӑ аслӑ жертвӑсем, вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра пирӗн халӑх тӳссе ирттернӗ йывӑрлӑхсемпе хӗн-хурсем, Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлесе хӑварас тесе тылра тата фронтра хӗрӳллӗн ӗҫлени,—ҫаксем пурте ахаль пулмарӗҫ, тӑшмана пӗтӗмпех ҫӗнтернипе вӗҫленчӗҫ».

Ҫак аслӑ ҫӗнтерӳсене эпир большевиксен партийӗ тата ҫулпуҫ Сталин юлташ ертсе пынипе турӑмӑр.

Пире ҫӗнтерӳсем тума хавхалантаракан тата организацилекен аслӑ Ленин — Сталин партийӗ тавра пӗтӗҫнӗ Хӗрлӗ Ҫар воинӗсене, мӗнпур совет ҫыннисене мухтавлӑ та паттӑр ӗҫсем тумашкӑн аслӑ Ленинӑн сӑнарӗ хавхалантарса пырать, гениллӗ ҫулпуҫ тата полководец Сталин юлташ ертсе пырать.

Аслӑ Сталин ертсе пынипе вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн Хӗрлӗ Ҫар хӑватлӑ, никам ҫӗнтерейми, вӑйлӑ, чи малта пыракан ҫар искусствипе хӗҫпӑшалланнӑ, опытлӑ ӗҫе парӑннӑ офицерсем, генералсемпе маршалсем ертсе пыракан ҫар пулса тӑчӗ. Пирӗн совет халӑхӗ фронта пулӑшас тӗлӗшпе хӑйне шеллемесӗр ӗҫленипе чӑннипех ӗнтӗ мухтавлӑ паттӑр халӑхӑн ятне илме тивӗҫ. Совет ҫыннисен тылри паттӑр ӗҫӗсем Хӗрлӗ Ҫарӑн кӗрешӗвӗн историне кӗрсе юлӗҫ.

Тӑшмана аркатса тӑкнӑ, парӑнтарнӑ. Гитлерла Германие ҫӗнтернӗ. Майӑн 9-мӗш кунӗ—пирӗн Ҫӗнтерӳ кунӗ—пирӗн Тӑван ҫӗршыв историне, мӗнпур цивилизациллӗ этемлӗхӗн историне ӗмӗрлӗхе кӗрсе юлӗ. Ҫак кун совет халӑхӗн аслӑ уявӗ, тӗнчене фашизм тискерлӗхӗнчен ҫӑлнин уявӗ пулӗ.

Пӗтӗм совет халӑхӗ ҫак историллӗ кунсенче ҫав тери савӑнса, Тӑван ҫӗршывшӑн ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ патриотла ӗҫсем тӑвасшӑн ҫунать. Фабрикӑсенче, заводсенче, шахтӑсемпе рудниксенче, колхозсемпе совхозсен уйхирӗсенче, лабораторисемпе ӑслӑлӑх учрежденийӗсенче—пур ҫӗрте те социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн ҫӗнӗ хумӗ ҫӗкленсе пырать. Совет халӑхӗ тӑшман кӳрсе хӑварнӑ ҫурана тӳрлетӗ. Пирӗн Тӑван ҫӗршыв татах та илемлӗрех, татах та вӑйлӑрах пулӗ.

Н. ЗАМЯТИН.
Генерал-майор.

Спортӑн ҫуллахи сезонӗ пуҫланчӗ

Майӑн 13-мӗшӗнче Шупашкарта спортӑн ҫуллахи сезонӗ уҫӑлнӑ ятпа эстафета пулса иртрӗ. Унта арҫынсем 3 этаппа 1000 метра, хӗрарӑмсем 3 этаппа 500 метра чупрӗҫ.

Арҫынсен командисенчен 1-мӗш вырӑна—«Динамо», 2-мӗш вырӑна—«Спартак», 3-мӗш вырӑна—«Сталинец» спорт обществисем йышӑнчӗҫ.

Хӗрарӑмсен командисенчен 1-мӗш вырӑна—«Буревестник», 2-мӗш вырӑна — Спартак», виҫҫӗмӗш вырӑна—«Динамо» спорт обществисем йышӑнчӗҫ.

Пӗтӗмӗшпе илсен, эстафетӑра 1-мӗшпе 2-мӗш вырӑнсене «Динамо» тата «Спартак» обществисем, 3-мӗш вырӑна «Буревестник», 4-мӗш вырӑна — «Сталинец» спорт обществисем йышӑнчӗҫ.

* * *

Профсоюзпа комсомолӑн ҫуллахи кросӗ Шупашкарта ӑнӑҫлӑн иртсе пырать. Малтанхи кун кроса пурӗ 1.500 ҫын хутшӑннӑ. Вӗсенчен 1380 ҫын ГТО нормисене панӑ. 1000 метра чупса тухассипе Капитонов («Динамо») мала тухрӗ. Вӑл ҫав дистанцие 1 минут та 37 секундра чупса тухрӗ. Хӗрарӑмсенчен Гушина («Буревестник») мала тухрӗ, вӑл 500 метра 1 минут та 37 секундра чупса тухрӗ

Шкулсенчи экзаменсем умӗн

Шкулти чи ответлӑ тапхӑр

Майӑн 21-мӗшӗнче шкулсенче экзамен пуҫланать. Ҫакӑ вӑл вӗренӳ ҫулӗнчи чи ответлӑ тапхӑрсенчен пӗри пулса тӑрать. Экзаменра кашни вӗренекен вӑтам е аслӑ шкула кӗме вӑл мӗнле хатӗрленни ҫинчен, совет шкулӗ ӑна мӗнле вӗрентни ҫинчен отчет парать. Ҫавӑнпа экзамена кашни вӗренекен лайӑх хатӗрленме тӑрӑшать.

Шупашкар районӗнчи Апашри вӑтам шкулта вӗренекенсем экзамена тахҫанах хатӗрленме тытӑннӑ. Ку тӗлӗшпе VII-мӗш класра вӗренекенсемпе уйрӑм калаҫу туса ирттернӗ.

Экзамена лайӑхрах хатӗрленме пулӑшас майпа шкулта ачасене чи лайӑх класенчен пӗрне уйӑрса панӑ. Вӑл класра таса та ҫутӑ, чӳречесем ҫинче чечексем ешӗреҫҫӗ. Стенасем ҫинче—картӑсем, таблицӑсем. Унтах экзаменсен расписанийӗ. Хӑш кун мӗнле предметпа экзамен пуласси кашни вӗренекен лайӑх пӗлсе тӑрать. Пур предметсем тӑрӑх та билетсем хатӗрлесе хунӑ. IV-мӗшпе VII-мӗш классенче вӑл билетсене стена ҫумне ҫырса ҫакнӑ.

Экзамена пысӑк пахалӑхпа ирттерсе, хамӑр шкулӑн чысне ҫӳлте тытассишӗн кӗрешетпӗр.

А. ЕГОРОВА.

Экзамен пама хатӗрленеҫҫӗ

ҪӖРПӲ. Кӑшаркассинчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта VII-мӗш класра вӗренекенсем экзамен пама тӑрӑшса хатӗрленеҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе шкулта ятарласа пӳлӗм уйӑрнӑ. Вӑл пӳлӗмре вӗренӳре кирлӗ пособисем—картӑсем, таблицӑсем, тӗрлӗ приборсемпе учебниксем — ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Вӗреннӗ материалсене тепӗр хут аса илсе ҫирӗплетес майпа мӗнле кӗнекесем вуламаллине кӑтартакан списоксем пур. Вӑл кӗнекесене ҫавӑнтах илсе вулама пулать. Дежурнӑй учительсем вӗренекенсене консультаци параҫҫӗ.

Ан. ИВАНОВ.

* * *

Нормӑран 4 хут тухӑҫлӑрах ӗҫлетӗп

Эпӗ Шупашкар районӗнчи Толиккасси ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. 16 ҫула ҫитсен, Челноков юлташ главнӑй инженер пулса тӑракан завода ӗҫлеме кӗтӗм. Килте ларма чун чӑтмарӗ, производствӑра ӗҫлесе фронта пулӑшас терӗм.

Малтанах маншӑн кунта пӗтӗмпех ҫӗнӗччӗ. Эпӗ машина таврашне нимӗн те ӑнланмастӑмччӗ. Ӗҫе вӗренме мана чӑваш хӗрӗ Мария Павлова нумай пулӑшрӗ. Мастер Илюшенко юлташ та пӗрмаях вӗрентсе пычӗ.

Икӗ ҫул хушшинче эпӗ штампсем тӑвакан цехри квалификациллӗ работницӑ пулса тӑтӑм. Халӗ эпӗ 3-мӗш разрядлӑ штамповщица шутланатӑп. Нормӑна тӑтӑшах 4—4,5 хут ирттерсе тултаратӑп. Ӗҫне кура—укҫи. Март уйӑхӗнче 800 тенкӗ ӗҫлесе илтӗм. Унсӑр пуҫне 200 тенкӗ преми пачӗҫ.

Тухӑҫлӑ ӗҫленӗ пирки мана комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадине куҫарчӗҫ. Бригадир Дергачева юлташ мана хисеплет, лайӑх ӗҫлеме вӗрентсе пырать.

Эпӗ ку таранччен тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларасшӑн мар. Малашне татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пулатӑп. Чӑваш республики 25 ҫул тултарнӑ ятпа пыракан ӑмӑртӑва хутшӑнса, нормӑна 5 хут ирттерсе тултарма обязательство илтӗм.

Эпӗ ҫак обязательствӑна пурнӑҫлатӑпах. Ҫапла тума мана фронтран килнӗ ырӑ хыпарсем хавхалантараҫҫӗ.

Стахановка **А. ВАСИЛЬЕВА.**

* * *

РЕСПУБЛИКА ТӐРӐХ

РАЙОН ЦЕНТРӖНЧИ КОНЦЕРТ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ҫак кунсенче кунта Чӑвашсен государство филармонийӗн артисчӗсем концерт пачӗҫ. Концерт программинче вырӑс халӑх юррисем нумай. Уйрӑмӑнах Галиская артистка вырӑс юррисене пысӑк мастерлӑхпа юрларӗ.

Вӑрҫӑ хирӗнче ҫапӑҫса суккӑрланнӑ баянист Решетников юлташ «Играй, мой баян», «Ленинградская», «Точно море, озеро глубоко» ятлӑ юрӑсене баянпа каласа хӑй юрлани концерта итлеме пынисене питӗ хумхантарчӗ. Госфилармони артисчӗсем ҫак районри ытти колхозсенче те концертсем пачӗҫ.

ҪАМРӐКСЕМ ВАЛЛИ ЛЕКЦИСЕМ

Калинино районӗнчи Юманай вӑтам шкулӗнчи учительсем ҫамрӑксем хушшинче лекцисемпе докладсем ирттереҫҫӗ. Ҫак кунсенче кунта: «Юлташлӑхпа килӗшӳ ҫинчен», «Совет хӗрарӑмӗ мӗнле пулмалла» темӑсемпе калаҫусем пулса иртнӗ. Ҫав калаҫусене ҫамрӑксем пысӑк тимлӗхпе итленӗ.

М. БЕЛОВ ДРАМАТУРГӐН ҪӖНӖ ПЬЕСИСЕМ

Чӑваш драматургӗ фронтовик Михаил Белов ялти драмкружоксем валли «Ҫамрӑк чӗресем» ятлӑ ҫӗнӗ пьеса ҫырнӑ. Пьеса ҫитес кунсенчех уйрӑм кӗнекепе пичетленсе тухать. Ҫавӑн пекех Белов юлташ «Вилӗмрен те вӑйлӑрах» ятлӑ тепӗр пьеса ҫырса пӗтернӗ.

Мускаври метрополитен ӗҫлеме пуҫлани 10 ҫул ҫитрӗ

Пирӗн ҫӗршыв столицинче питӗ чаплӑ сооружени—метрополитен туса пӗтернӗренпе 10 ҫул иртрӗ. Метрополитен вӑл куҫса ҫӳремелли чи культурӑллӑ хатӗр пулса тӑрать, вӑл ҫынсене хӑвӑрт куҫарать, ҫавӑнпа вӑл ӗҫҫыннисен яланхи пурнӑҫне ҫирӗп кӗрсе ларчӗ. Унпа куллен 1,6 миллион ҫын усӑ кураҫҫӗ.

Иртнӗ вӑхӑт хушшинче метрополитен тӑршшӗ виҫӗ хут ытла ӳснӗ. 1935 ҫулта унӑн пӗр линии ҫеҫ пулнӑ, ҫав линин тӑршшӗ 11,4 километр пулнӑ; халӗ виҫӗ линии ӗҫлет, вӗсен тӑршшӗ 36,7 километр. Вунӑ ҫул хушшинче метрополитен линийӗсемпе 4.665 пин поезд кайнӑ, вӗсем 2,6 миллиард ҫын ытла куҫарнӑ.

Мускаври метрополитен питӗ йӗркеллӗ ӗҫлет, вӑл чи лайӑх транспорт ҫеҫ пулса тӑмасть, вӑл тата чи хӑрушсӑр транспорт пулса тӑрать. Метрополитенӑн йышлӑ та тӗрлӗ электромеханика установкисене нумай вӑхӑт хушши сӑнаса пӑхнӑ. Вӗсем 10 ҫул хушши пӗр чарӑнмасӑр тата йӗркеллӗн ӗҫленӗ. Хамӑр ҫӗршыври заводсем туса кӑларнӑ оборудовани, механизмсем, аппаратура, питӗ тӗрлӗ тата час-часах халиччен пулман йышши продукци хӑйсен пысӑк пахалӑхне кӑтартнӑ. Метрополитен ҫӗнӗ, лайӑхлатнӑ вагонсем туяннӑ. Ҫав вагонсем ларса ҫӳреме ӗлӗкхисенчен те меллӗрех тата техника енчен лайӑхрах. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче метрополитенпа бомбоубежищӗсем вырӑнне усӑ курнӑ.

Метрополитен коллективӗ ҫар заказӗсене пурнӑҫласа тӑнӑ. 1944 ҫулта боеприпассем туса кӑлармалли задание вӑл 16 процент ирттерсе тултарнӑ. Метрополитен работникӗсен бригади нимӗҫ захватчикӗсем ҫӗмӗрнӗ чугун ҫулсене юсанӑ.

Метрополитен тума вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче те чарӑнман. Метрополитенӑн виҫҫӗмӗш черетре тумалли ҫӗнӗ линийӗсене — Замоскворецки тата Покровски радиуссене— туса пӗтерсе хута янӑ, ҫав ҫӗнӗ линисен тӑршшӗ 13,5 километр. Ҫав линисен сооруженийӗсем чи лайӑх техникӑпа пуян. Унта станцисем пысӑк та питӗ чаплӑ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче правительство метрополитенӑн ҫӗнӗ линине тума йышӑннӑ. Тӑваттӑмӗш черетре тумалли линин тӑршшӗ 20 километр пулать, вӑл хулан чи паха центрӗсене, тӗп вокзалӗсене, паркӗсене, стадионӗсене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарӗ.

Метрополитенӑн ҫӗнӗ линийӗ Мускава сталинла аслӑ план тӑрӑх ҫӗнетсе урӑхлатас ӗҫе питӗ пысӑк пулӑшу пани пулса тӑрӗ. (ТАСС).

Черчилль тухса калани

ЛОНДОН, майӑн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви паян Англи премьер-министрӗ Черчилль радиопа сӑмах тухса калани ҫинчен пӗлтерет. Хӑйӗн сӑмахӗнче Черчилль вӑрҫӑ пуҫламӑшӗнче вӑрҫӑ ӗҫӗсем мӗнле пынине пӑхса тухса, ҫав тапхӑра Англи пурнӑҫӗшӗн «чӑннипех вилӗмле хӑрушӑ тапхӑр» вырӑнне хурса хакланӑ. Малалла Черчилль Англие Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем пулӑшни ҫинчен, тӑшмана ҫӗнтермешкӗн Англи халӑхӗ мӗнле кӗрешни ҫинчен каласа панӑ. Унтан Черчилль Германи Совет Союзне вӑрӑ-хурахла тапӑнни ҫинчен, вӑрҫа Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем хутшӑнни ҫинчен, Европӑра гитлерла Германие парӑнтарасси патне илсе пынӑ вӑрҫӑ ӗҫӗсем малалла мӗнле пулса пыни ҫинчен каланӑ. Черчилль ҫапла каланӑ: «Хальхи вӑхӑтра Европӑри ҫӗнтерӳллӗ ҫапӑҫусен хирӗнче 3,5 миллион американец ытла пур», «ҫав операцисенче Англи ҫыннисем американецсем кӑларса тӑратнӑ хисепӗн виҫӗ пайӗнчен пӗр пайӗ чухлӗ пулнӑ», тенӗ.

Черчилль ҫапла кӑтартса панӑ: союзлӑ ҫарсем хӗвеланӑҫ енчен Германие ҫул уҫнӑ вӑхӑтра «тепӗр енчен, хӗвелтухӑҫӗнчен, вырӑс халӑхӗн хӑватлӑ ҫар вӑйӗсем, Германи ҫарӗсене пирӗн фронтринчен чылай нумайрах хӑйсен енче тытса тӑнӑскерсем, Германин чӗринче пирӗнпе тӗл пулас тесе, малалла вӑркӑнчӗҫ».

Хӑйӗн сӑмахӗн юлашки пайӗнче Черчилль Англишӗн халӗ «пӗтӗм йывӑрлӑхсемпе ӗҫсем» кая тӑрса юлнӑ тесе калама пултарайманни ҫинчен асӑрхаттарнӑ, мӗншӗн тесен халӗ Европӑра вӑрҫӑ хыҫҫӑн ирӗклӗхпе демократие сыхласа тӑма пултаракан организаци тумалла, пӗтӗм тӗнчери организаци тӑвас задачӑна татса памалла, ҫакна тумашкӑн халӗ Сан-Францискӑра халӑхсен представителӗсем пухӑннӑ, кунсӑр пуҫне тата Японие хирӗҫ пыракан вӑрҫа ӑнӑҫлӑ пӗтермелле.

РУМЫНИРЕ ВӐРҪӐ ПРЕСТУПНИКӖСЕНЕ СУД ТУНИ

БУХАРЕСТ, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). «Ромынна Либера», «Журналул» тата «Скынтейя» хаҫатсем 38 вӑрҫӑ преступникне айӑплакан акт пичетлеме тытӑннӑ. Айӑпланакан 38 ҫынтан 25 ҫынна арестленӗ, вӗсем ҫар трибуналӗ умне тӑраҫҫӗ, ыттисене халӗ арестлеймен-ха.

Айӑпланакансем тӑватӑ тӗп ушкӑна пайланаҫҫӗ: пӗрремӗш ушкӑна, Мачич тата Трестиоряну генералсем ертсе пынӑскере, Одессӑра тунӑ преступленисемшӗн айӑплаҫҫӗ; иккӗмӗшне — Калатеску генерал ертсе пынӑскере, Черновицы хулинчи гражданла халӑха вӗлернӗшӗн тата ҫаратнӑшӑн ответ тыттараҫҫӗ; виҫҫӗмӗшне—Злотеску полковник ертсе пынӑскере, Тыргу-Жиу концлагерӗнче тунӑ преступленисемшӗн айӑплаҫҫӗ; тӑваттӑмӗшне—Мурджеску ертсе пынӑскере, Румынирен кӑларса янӑ еврейсене Вапняркери лагерӗнче вӗлернӗшӗн ответ тыттараҫҫӗ.

ГУДЕРИАНА ТЫТКӐНА ИЛНӖ

ЛОНДОН, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио ҫапла пӗлтерет: Америка ҫарӗсем ӗнер Германин генеральнӑй штабӗн начальникӗ пулса ӗҫленӗ Гудериан генерала тыткӑна илнӗ.

АФИНӐРА ГРЕК ОФИЦЕРНЕ СУД ТӐВАҪҪӖ

АФИНЫ, майӑн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Майӑн 15-мӗшӗнче ҫар сучӗ Греци жандармерийӗн лейтенанчӗн Венецанопулосӑн ӗҫне пӑхса тухать. Венецанопулоса 1943 ҫулхи февральте, урӑхла каласан, Грецие гитлеровецсем йышӑнса тӑнӑ вӑхӑтра, жандармери участокӗн начальникӗ вырӑнӗнчен «тарнӑшӑн» айӑплаҫҫӗ.

«Элефтери Эллада» хаҫат Лондонри радио 1943 ҫулхи августӑн 8-мӗшӗнче ҫав лейтенант ӗҫӗ пирки каланӑ сӑмахсене пичетлесе кӑларать. Лондонри радио ун чухне хӑйӗн сӑмахне ҫакӑн пек каласа вӗҫленӗ: «Полиципе жандармерин пур офицерӗсем те хастарлӑ та таса чӗреллӗ Венецанопулос лейтенант пек тумалла, Венецанопулос вӑл захватчиксемшӗн ӗҫлеме килӗшмен, вӑл хӑйӗн ҫыннисемпе пӗрле, хӗҫпӑшалӗсене илсех, партизансем патне кайса хутшӑннӑ».

Хаҫат ҫапла калать: Венецанопулоса наказани пани пӗтӗм ҫӗршывшӑн намӑс пулнӑ пулӗччӗ, оккупантсем валли ӗҫлеме килӗшменнине Гитлер лартнӑ ҫынсем кӑна дезертирство тесе калама пултарнӑ.

Лӑпкӑ океан ҫинчи вӑрҫӑ

ВАШИНГТОН, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Лӑпкӑ океан ҫинчи флочӗн штабӗ ҫапла пӗлтерет: Окинава утравӗ ҫинче Америка ҫарӗсем японецсен пӗр крепоҫне пырса кӗмелли ҫулсем ҫинче тӑшманпа питӗ хаярӑн ҫапӑҫнӑ, японецсем Америка ҫарӗсен позицийӗсем хыҫне анса ларма хӑтланнӑ. Анчах та вӗсен ӗҫӗ путланса ларнӑ.

Майӑн 13-мӗшӗнче американецсен бомбардировщикӗсем Палау, Маркус, Трук утравӗсене пыра-пыра тапӑннӑ.

ВАШИНГТОН, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Ҫар министерстви ҫапла пӗлтерет: Майӑн 14-мӗшӗнче американецсен «Вӗҫекен крепость» йышши хӑватлӑран та хӑватлӑ 500 бомбардировщикӗ, Марпан утравӗсем ҫинчен вӗҫсе улӑхса, Японин Нагоя хулине тапӑннӑ.

КЕСКЕН

▲ Америкӑн 3-мӗш армийӗн чаҫӗсем союзниксен ҫарӗсене хирӗҫ Нормандире ҫапӑҫнӑ эсэсовецсен бронетанковӑй корпусӗн командующине, нацистсен партийӗн ертсе пыракан членӗсенчен пӗрне, Зепп Дитриха тыткӑна илнӗ.

▲ Финсен хаҫачӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, финсен государство полицийӗн начальникӗ пулнӑ Антоние концлагере хупса лартнӑ.

▲ Канада ҫарӗн, флочӗн тата авиацийӗн ҫак вӑрҫӑра майӑн 7-мӗшӗччен 202.875 ҫын пӗтнӗ. Тӗнчери пӗррелӗш вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Канадӑн 190.092 ҫын пӗтнӗ пулнӑ. (ТАСС).

* * *

Хаҫатра пичетленсе тухнӑ материалсем тӑрӑх

„Пӗр така 37 кубометр вутӑ мӗнле турттарнӑ“

Февралӗн 9-мӗшӗнче пирӗн хаҫатра ҫакӑн пек ятлӑ пӗчӗк фельетон пичетленсе тухрӗ. Красноармейски районри «Пахарь» колхоза иртнӗ кӗркунне Ҫӗмӗрле завочӗ валли вутӑ турттарма наряд панӑ пулнӑ. Ҫав наряда пурнӑҫлас вырӑнне, ҫак колхозӑн председателӗ Н. Иванов тата районри вӑрманпромхозӑн старши десятникӗ Николаев ултавлӑ ҫул ҫине тӑнӑ. Колхоз председателӗ Иванов юлташ часах Вӑрнарти вутӑ склачӗн заведующине Романова пӗр така, пӗр пӑт ҫӑнӑх леҫсе панӑ. Ҫак ӗҫе «организацилекен» десятник М. Николаев та тӳпесӗр юлман. Романовӗ вара «Пахарь» колхоза 37 кубометр вутӑ турттарнӑ тесе справка панӑ.

Редакцине ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, фельетонра ҫырнӑ фактсем тӗрӗс пулнӑ. Айӑплисене тивӗҫлӗ ответ тыттарнӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сельэлектрӑн Чӑваш конторине васкавлӑн ҫакӑн пек работниксем кирлӗ: план отделӗн начальникӗ, экономист, главнӑй бухгалтерӑн заместителӗ, инженер-гидротехниксем тата техниксем.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 7, Сельэлектро.

3—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редакторӑн — 0—67, заместителӗн — 2—89, секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн 3—97, промышленность пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, издательство контори и — 0—23.

НТ 00592 Упра... полиграфпромышленности ... СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000